Мария ЕЛАНОВА:
Хурланнипе юрласа ярсан пĕтĕм ăш-чик пăтранать

БИОГРАФИРЕН

Мария Еланова Вăрнар районĕнчи Çĕрпелте çуралнă. Шупашкарти Ф.П.Павлов ячĕллĕ музыка училищин вокал уйрăмĕнче вĕреннĕ, Чулхулари М.И.Глинка ячĕллĕ консерваторире пĕлĕве тăрăлатнă. Австрире, Чехире ăсталăх курсĕсенче пулнă. 1992 çултанпа – Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕн солистки. Вăл – ЧР тава тивĕçлĕ артистки /1995/, Чăваш халăх артистки /1997/, РФ тава тивĕçлĕ артистки /2008/.

Пирĕн чаплă юрăç Мария Еланова (Ухтерикова) уçă та черчен сопрано сассипе шăрантарнă юрăсене Шупашкарта пурăнакансем çеç мар, республика тулашĕнчисем те, ют çĕршыв çыннисем те итлесе киленнĕ. Паян Мария Ивановна – «Хыпар» тĕпелĕн хăни.

– Калăр-ха, Мария: эсир, чăваш ялĕнче кун çути курнăскер, ахаль юрăç кăна мар, опера солистки, чăн-чăн профессионал шайне çити çĕкленнĕскер, ача чухне мĕнле пулнă-ши, ун чухне мĕнле юрăçсем килĕштеретчĕç?

– Килте аттепе анне юрланине итлесе ÿсрĕм. Атте механикчĕ, анне дояркăра та, хуçалăхри ытти ĕçре те вăй хунă. Иккĕшĕн сăн ÿкерчĕкĕсем те хăй вăхăтĕнче Хисеп хăми çинче çакăнса тăратчĕç. Эпир саккăрăн пĕртăван пулнă. Кĕçĕн шăллăм, шел те, Афган вăрçинчен тавăрнă хыççăн пирĕнтен яланлăхах уйрăлчĕ. Эпĕ – пиллĕкмĕш ача. Манран малтисем те, кайран çуралнисем те – пурте юрлатпăр.

– Ахăртнех, тăван ялăр сирĕн чунра пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнать.

– Атте-анне çурчĕ хупă мар, паян тăван килте аслă пичче Петр пурăнать. Аппам та çак ялах качча тухнă. Çуралнă кĕтес яланах туртать. Унта ачалăх кăна мар, пурăнма вăй парса тăракан асамлăх та пур.

– Ачаранах юрланă тăк шкул хыççăн тÿрех музыка училищине çул тытрăр пулĕ?

– Апла мар çав. Шкулта начар вĕренмен. Учительсем хăйсен предмечĕсемпе пĕлÿ илтересшĕнччĕ, çавăнпа хама шыракаларăм. Шупашкарти пир-авăр комбинатĕнче икĕ çул ĕçленĕ хыççăн тин музыка училищине çаврăнса çитрĕм. Вĕренме кĕриччен ĕçлеме тивнишĕн пĕрре те кулянмастăп, пурнăçра унашкал опыт пулăшать кирлĕ. Вокал уйрăмĕн кафедра пуçлăхĕ Станислав Кондратьев тĕлĕннипе: «Кунашкал саспа ку таранччен ăçта çÿренĕ эсĕ?» – тесе ыйтнăччĕ. Тăхăр каччă, пĕр хĕр вĕрентĕмĕр вокал уйрăмĕнче.

– Пулас мăшăрăрпа та кунтах паллашнă-и?

– Паллашнă çеç мар, пĕрлешрĕмĕр те. Виççĕмĕш курс хыççăн ывăлăм Саша çуралчĕ. Мăшăрăм малалла Чулхула консерваторине вĕренме кайрĕ, ун хыççăн – эпĕ те. 1992 çулта Шупашкара таврăнтăмăр.

– Эсир оперăпа балет театрне ĕçе вырнаçнă тапхăр шăпах унта СССР халăх артисчĕ, пирĕн ентеш Максим Михайлов ячĕллĕ опера фестивалĕ йĕркеленнĕ самантпа пĕр килет. Пĕрремĕш фестивале хутшăннă-и?

– Çав вăхăтра эпĕ консерваторире вĕренеттĕм-ха. Чулхулари оперăпа балет театрĕн тĕп режиссерĕ, эпĕ Чăваш Енрен пулнине пĕлсе, хăйпе пĕрле Шупашкара фестиваль курма илсе килчĕ. Ун хыççăн темиçе уйăхранах Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕнче репетицисене хутшăнма пуçларăм. Шалва Мегрелишвили темиçе парти сĕнчĕ, эпĕ Марфăна /«Царская невеста»/ суйларăм. Вăл чунпа та, сасăпа та питĕ çывăхчĕ. Иккĕмĕш фестивальте манăн дебют шăпах асăннă партипе пулчĕ. Михайлов ячĕллĕ фестиваль маншăн пысăк пĕлтерĕшлĕ, вăл пултарулăх çулне уçса пычĕ.

– Эсир питĕ нумай тухса çÿренĕ. Германие е Австрие илес тĕк, унта, пирĕнпе танлаштарсан, оперăна питĕ юратаççĕ.

– Чăнласах çапла, пысăк искусство кăна мар, элитарлă та теççĕ. Апла пулин те оперăна яланах халăх валли çыраççĕ. «Опера» сăмаха латыньрен куçарас тăк «ĕç» тенине пĕлтерет. Апла пирĕн вăй хурса, тар тăкса ĕçлемелли професси.

– Шупашкар кураканĕ пирки мĕн калатăр, опера енĕпе Европа шайне çĕкленме пултартăмăр-ши?

– 10-20 çул каялла лару-тăру йывăртарахчĕ. Халĕ пурнăç условийĕ тĕлĕшпе те, ытти енĕпе те Анăçран юлмастпăр. Оперăна та ятарлă пĕлÿ илнисем çеç мар, шкул ачисем те, студентсем те, музыкăна юратакансем те çÿреççĕ.

– Çĕнĕ ĕмĕр пуçламăшĕнче сирĕн кун-çулăрта пысăк инкек пулчĕ: пĕртен-пĕр ывăлăра юлашки çула ăсатма тиврĕ. Çак хурлăха мĕнле чăтса ирттернине пĕр хăвăр кăна пĕлетĕр ĕнтĕ.

– 16 çул Сашăсăр пурăнатпăр. Çын вĕт саваннипе кăна мар, хурланнипе те юрлать. Хурланнипе юрласа ярсан ăшчик пăтранма, пĕтĕм кĕлетке чĕтренме пуçлать. Хам çеç макăрса ярас мар теттĕм сцена çинче. Мĕнле чăтрăм-ши? Мухтав тăвансене, юлташсене, юнашар пулнă çынсене. Çав сухатуран çеккунтлăха та уйрăлмастăп эпĕ. Çакăн хыççăн ют çĕре тухса çÿресси те, малтанхи çыхăнусем те сахалланчĕç.

– Çапах хăй вăхăтĕнче эсир ăçта кăна юрламан пулĕ. Сăмахран, Венăри Гизи Хеллерăн музыка салонĕнчи концертсене хутшăнни хăй мĕне тăрать.

– Çапла, пулнă ун пекки те. Унашкал салонсем пирки халĕ илемлĕ литературăра кăна вуласа пĕлеетĕн. Венăра вара вăл пур. Унта темиçе хут та юрланă. Европа оперисемсĕр пуçне чăваш юррисене те шăрантартăм. Унтисемшĕн пирĕн юрă – чăн-чăн экзотика. Апла пулин те шăпах Венăри салона пынисенчен чылайăшĕ Чăваш Ен пирки самай пĕлетчĕ. Вĕсенчен ытларахăшĕ дипломатчĕ, тавра курăмлă çыннччĕ. Çавăн пекех Чехири Петер Дворски фестивалĕсене те хутшăннă. Манăн «Тĕрĕк оперин йăла кунĕсем» /Турци, Çурçĕр Кипр/ улттăмĕш фестивале Чăваш Енĕн ÿнер элчи пулса хутшăнма тÿр килчĕ. Ама патшин ролĕпе /«Асамлă флейта»/ Анкара хулин /Турци/ опера театрĕн сцени çине тухрăм. Австрире ăсталăх курсĕнче вĕреннĕ вăхăтра мана темшĕн француз хĕрĕ тесе йышăнатчĕç, Германире вара Венăран килнĕскерпе пăтраштаратчĕç. Вена диалекчĕ сисĕннĕ-ши? Тюмень, Самар чăвашĕсем патĕнче концертсем кăтартнă, унта, паллах, чăваш юррине ытларах шăрантарнă.

> **«ПУРНĂÇА ТАВĂРМА МАЙ КИЛНĔ ТĔК ПĔТĔМПЕХ УРĂХЛА ЙĔРКЕЛЕСЕ ПЫНĂ ПУЛĂТТĂМ. ШЕЛ, УН ПЕК ТУМА ÇУК»**

– Чăваш композиторĕсенчен хăшĕн юрри сирĕн репертуарта нумайрах?

– Анисим Асламасăн чылай. Эпĕ театра ĕçлеме килсенех мана нумай юрă панăччĕ, паллисене те, пурте пĕлменнисене те. Геннадий Воробьев, Филипп Лукин, Григорий Хирбю хайлавĕсене яланах юрланă эпĕ. Аттепе анне кăмăлланă юрăсене те шăрантаратăп. Чи юратни – «Анне сăнарĕ» юрă /сăвви А.Гордеевăн, кĕвви Г.Маркияновăн/. Вĕсене çырса хăварас ĕмĕтĕм пур.

– Театр çулĕ тумхахлă теççĕ. Сирĕн «сукмак» мĕнлерех килсе тухрĕ?

– Мана яланах юрлаттарнă, тивĕçлĕ партисем панă. Маларах лирикăллă сопранăллă парти ытларахчĕ.

– Килте те юрлатăр-и?

– Хăш чухне 24 сехет те çитмест. Паллах, хваттерте сцена çинчи пек янăраттармастăп ĕнтĕ, вĕренетĕп кăна, сас уçма театра çÿретĕп.

– Хăвăр çинчен те калаçар. Мĕнлерех çын эсир?

– Атте-анне çапла вĕрентнĕ: «Ан мухтанăр, ан каппайланăр». Тĕрĕссипе, манăн профессипирки хамран ытларах тата кам пĕлет-ха? Çавăнпа сассăмпа ĕçлеме, пуçри тата ăшри шухăшсене çын патне çитерме вĕренсе çитрĕм пулĕ, анчах мухтанасси йăлара çук. Çапах калас килет: сассăм çултан-çул вăйланса пычĕ. Çÿллĕ сопрапоран пуçласа варринчи /лирика/, каярахпа драма сопрано партисене те юрлама пуçларăм. Сăмахран, Амелия, Тоска партийĕсене пачĕç, вĕсенче мĕн чухлĕ драма. Венăра вĕреннĕ чухне мана преподаватель çапла каланăччĕ: «Мария, сирĕн сасă тĕлĕшпе пуласлăх питĕ пысăк». Енчен те тĕнчене тухса çÿремен, тĕрлĕ фестивале хутшăнман, ăсталăх курсĕнче вĕренмен пулсан, тен, хамăн пĕчĕк «картарах» пурăнаттăм пулĕ.

– Хальхи вăхăтра Шупашкарта та искусство, культура енĕпе аслă пĕлÿ илме пулать. Мĕнле шухăшлатăр: пултарулăх çыннине çакă çеç çителĕклĕ-и е паллă шкулсене ăс пухма, пĕлĕве туптама каймалла?

– Хамăрăн пурри, паллах, питĕ лайăх, шанчăклă. Юрăç, ташăç ăсталăха ÿстерес тет пулсан малалла ăнтăлатех: е Мускава, е ытти вырăна. Мана студентсене вĕрентме тахçанах чĕнетчĕç. Пĕр тапхăр И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн искусство факультетĕнче ĕçлерĕм, хальхи вăхăтра студентсем, çамрăк юрăçсем валли уйрăм уроксем паратăп.

– Чи малтанах мĕне вĕрентес килет вĕсене?

– Ниме пăхмасăр малалла ăнтăлма. Пысăк ăстасен пурнăçĕ çинчен, хам мĕн пĕлнине, курнине каласа кăтартатăп. Петер Дворски пирки сăмахран. Эпĕ ун фестивальне хутшăннă. Карел Готпа юрлама тивнĕччĕ. Галина Вишневская, Борис Штоколов, Мария Биешу, Ирина Архипова, Владислав Пьявко пек чаплă юрăçсем çумĕнче хăвăн та лайăх ăста пулас килет.

– Пушă вăхăт пур-и, ăна мĕнле ирттеретĕр?

– Хăй вăхăтĕнче тĕрленĕ те, çыхнă та. Халĕ – çук. Кĕнеке вулама юрататăп. Чăвашлисене тахçанах алла тытманха, вĕсем патне те таврăнмалла. Шкулта вĕреннĕ вăхăтра «Хура çăкăра» юратса вуланă. Çеçпĕл сăввисем питĕ килĕшетчĕç. Телекуравпа мĕн пăхмаллине нумай шырама тивет. Мĕн пурри кăна тивĕçтермест. «Культура» канал передачисем килĕшеççĕ. Чăваш передачисене те итлетĕп, вĕсене пăхмасан çылăх пек.

– Тус-тантăш нумай-и?

– Ĕлĕкрех тата йышлăччĕ. Çулсем вĕсене хăйне май «ала» витĕр каларса пыраççĕ. Ман чи çывăх юлташ – пĕрле ÿснĕ, Шупашкарта тата çывăхланнă Нина Зайцева. Вăл – ача тухтăрĕ. Эпир унпа пĕр тапхăр пĕр пÿлĕмре те пурăнтăмăр. Ĕçрен таврăнсан: «Маша, тархасшăн, юрла-ха», – тетчĕ. Халĕ те эпĕ хутшăнакан пур спектакле те пĕр сиктермесĕр çÿрет. Эпĕ унпа тем çинчен те чуна уçса калаçатăп. Пурин те çавăн пек çывăх тус пултăрччĕ.

– Эсир машинăпа та çÿретĕр, хăюллă çын пулнине çакă та çирĕплетет.

– Халĕ кам кăна машинăпа çÿремест пулĕ. Çиччĕмĕш çул ĕнтĕ руль умĕнче.

– Мăшăр пирки те каласа кăтартсамăр.

– Вăл маншăн юратнă мăшăр кăна мар, чи çывăх юлташ та. Сергей мана сăмахсăрах ăнланать, пур енĕпе те пулăшать. Арçын хĕрарăма упрама та, сыхлама та, ачашлама та, алăра тытма та пĕлтĕр. Çавăнпа вăл – арçын.

– Тата мĕнлерех партисенче юрлас килет?

– Çамрăкрах пулнă тăк калăттăм, халĕ асăнас та килмест. Паян мĕн пуррипе çырлахатăп.

– Сирĕн ытларах чухне ют чĕлхепе юрлама тивет. Сăмахĕсене мĕнле астуса юлатăр?

– Ку пирĕн ĕç. Тĕнчере итальян композиторĕсен опери нумай. Пире училищĕре те, консерваторире те итальянла вĕрентнĕ. Унсăр пуçне уйрăм урокcем те илнĕ. Нимĕç чĕлхине Австрире куçаруçăра ĕçленĕ ЭрнстНоймайер патĕнче вĕреннĕ.

– Хăш композиторăн произведенийĕсем патне чун ытларах туртăнать?

– Пĕрне те хурламастăп, тиркеместĕп, анчах Джузеппе Верди çырнă партисене уйрăмах юрататăп. 30-мĕш опера фестивалĕнче Реквиеме питĕ юрлас килетчĕ. Эпĕ ăна хăй вăхăтĕнче Испанире те юрланă. Ĕмĕтĕм пурнăçланчĕ. Вердин кирек хăш партине те кăмăллатăп, анчах çак вăхăтра чун ытларах Реквиеме ыйтатчĕ. Гала-концерта та хутшăнтăм. Пирĕн фестивальте Итали солисчĕсем те, дирижерĕсем те пĕрре кăна мар пулнă. Вĕсем эпĕ сцена çинче юрланине илтсен: «О, ку пикен шăпах Верди сасси» – тенĕ. Çакă маншăн питĕ пысăк хак.

– Пурнăçра тата мĕн çитмест?

– Пурте пур, пĕр çын кăна çитмест. Ыттине туянма пулать. Пурнăçа тавăрма май килнĕ тĕк пĕтĕмпех урăхла йĕркелесе пынă пулăттăм. Шел, ун пек тума çук.

– Мĕнле çынсем килĕшеççĕ?

– Тĕрĕслĕхе мала хуракансем, тÿрĕ кăмăллисем, хăйсен ĕçне тĕплĕн тăваканcем. Анне хăйĕн пилĕк хĕрне: «Якăлти пулмалла мар», – тетчĕ. Ун чухне çак сăмахăн пĕлтерĕшне те ăнланман-ха.

– Тăванăрсемпе час-часах тĕл пулатăр-и?

– Питĕ юрататăп вĕсене, аппасемпе пиччем-шăллăмсене. Надежда, Зоя, Николай, Елена Тюмень облаçĕнче пурăнаççĕ. Тĕп килте пичче Петр терĕм ĕнтĕ, аслă аппа Людмила та тăван ялтах тымар янă. Май килсенех тăван яла çитсе курма тăрăшатăп.

■ **Надежда СМИРНОВА калаçнă**